Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Воробьева Раиса Васильевна

## Книга: Асамлă вăрманта = В волшебном лесу

## Стихотворение: Çумăр, çу!

Çумăр, çу, тата вăйлан,
Çумăр, çу, ан наянлан!
Йывăр тусана пусар,
Уçă сывлăш пире пар.
Пин-пин савăк пĕрхĕме
Парнеле ман çĕрĕме.
Кирлĕ эс пире, пĕлсем,
Ав вăй илчĕç чечексем.
Симĕс курăк тасалать,
Кавир евĕр туйăнать.
Çумăр, çу, тата вăйлан,
Çумăр, çу, ан наянлан!
Çырмасем шавлаччăрах.
Ватти-вĕтти яланах
Чăтăмсăр кĕтет сана.
Çумăр, эс çусам кăна!
Чĕрчунсем те кайăксем
Савăнăçлă эс килсен.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.